Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерÿ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнченпе тухать

28 (7989) № ✻ *Шăмат кун, 2012 çулхи ака (апрель) уйăхĕн 14-мĕшĕ* ✻ *Хакĕ ирĕклĕ*

## Муркаш çĕрĕнче – Раççейри делегаци

**Суту-илÿ ĕçĕ**

Çак кунсенче Чăваш Республикине пысăк делегаци, вăл шутра Раççей Центросоюзĕн канашĕн председателĕ Е. Кузнецов килсе çитрĕ. Ĕçлĕ çул çÿревĕн сăлтавĕ вара пысăк. Чăвашпотребсоюз икĕ çул ĕнтĕ ял хуçалăх продукцине хатĕрлес, тирпейлес, сутас енĕпе малти шутланать. Çавна май Раççей Федерацийĕн потребительсен обществисен «уй-хиртен лавкка сентри çине» девизпа пĕрлехи семинар-канашлăвĕ иртрĕ. Унта çитмĕл ытла регионтан хутшăнчĕç. Тĕп ыйту – ял хуçалăх продукцине туса илес, тирпейлес тата сутас ĕç-хĕл тавра. Пысăк делегаци республикăри тăвată райпона çитсе курчĕç.



Семинар-канашлăва хутшăнакансем Муркаш тата Мăн Сĕнтĕр райповĕсен магазинĕсенче, обществăлла апатлану предприятийĕсенче пулчĕç. Пĕрремĕш ушкăна чăваш йăли-йĕркипе çăкăр-тăварпа Шомикри лавккара кĕтсе илчĕç.

– Енчен те Раççейĕн тĕрлĕ кĕтесĕнчи специалистсем Муркаш тăрăхне аякка хăвармаççĕ пулсан пирĕн ĕç-хĕл те курăмлă, – терĕ район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев **(сăн ÿкерчĕкре)**.

Икĕ райпо районăн экономикăпа социаллă аталанăвне пысăк тÿпе хываççĕ, ял хуçалăх продукцине туса илекенсемпе тачă ĕçлеççĕ – çакă вара тупăш çăл куçĕ. Вĕсем кăçалхи виçĕ уйăхра ваккăн тавар 171828,5 пин тенкĕлĕх сутнă, çакă иртнĕ çулхинчен 4,5 процент ытларах. Обществăлла апатлану точкисенче, лавкка сентрисенче шăпах ытларах хамăр уй-хиртен килнĕ пысăк пахалăхлă продукци. Сĕтел çинчи вĕри çĕр улми, хуран кукли тата чăвашсен ытти ĕçми-çими питĕ кăмăллă пулчĕ хăнасене. Паллах, хамăр продукцие ытти тăрăхрипе танлаштараймăн – пысăк пахалăх пуринчен паха.

Иккĕмĕш ушкăн вара Чăвашпотребсоюзăн Етĕрнери аш-какай комбинатĕнче пулса курнă хыççăн Нискассинчи самообслуживани мелĕпе ĕçлекен лавккана çитрĕ. Самообслуживани мелĕ тавар туянакана ытларах тивĕçтерет, çавна май пур çĕрте те анлă сарăлса пырать. Муркаш райповĕ çак çĕнĕлĕхпе усă курма пуçланăранпа тавар çаврăнăшĕ те палăрмаллах ÿсрĕ. Райпо халăх ыйтăвне тĕпе хурса çулталăкра суту-илĕвĕн темиçе точкине хута ярать е тĕпрен юсать. Акă иртнĕ çул «Бриз» пиццери ĕçлеме пуçларĕ. Кунта халăх йышлă çÿрет, март уйăхĕнчи тавар çаврăнăшĕ – 600 пин тенкĕ. Пиццери ăстисем пилĕк тĕрлĕ пицца сĕнчĕç. Çĕр ĕçченĕн ĕçлеме кăна мар, кану вăхăтне илемлĕ, меллĕ ирттерме те пĕлмеллине палăртрĕç хăнасем кунти хăтлăха асăрханă май.

– Çĕнĕ объекта август уйăхĕн вĕçĕнче тума пуçларăмăр та çулталăк вĕçленнĕ тĕле туса пĕтертĕмĕр. Çакăнта пĕтĕмпе пилĕк миллиона яхăн укçа-тенкĕ хыврăмăр, – терĕ Муркаш райпо канашĕн ертÿçи Борис Андреев.

Çавăн пекех делегаци «Гастроном» тата «Универмаг» магазинсенче, «Радуга» кафере пулчĕ. Эпĕ хам та тавар туянакан пулнăран ытти субъектри суту-илÿ ĕçĕпе кăсăклантăм, Якут Республикинчи пĕр райпо канашĕн ертÿçипе сăмахларăм.

– Эпир те хамăр ĕçе çакăн майлах йĕркелеме тăрăшатпăр. Кунти пекех халăхран сĕт пухассипе, ытти продукци йышăнассипе ĕçлетпĕр. Апат-çимĕç продукцине илес пулсан вăл сирĕн патра йÿнĕрех, – терĕ вăл.

Çавăн пекех Свердловск облаçĕн представителĕпе те калаçас терĕм. Мана, тавар туянакана, паллах, ытларах хак кăсăклантарать. Вăл пирĕн патра çăкăр йÿнĕрех пулнине тата яллă вырăнсенче халăх ыйтăвне тивĕçтересси – тавар ассортиментĕнче, сутуçăсен ăсталăхĕ – çÿллĕ шайра пулнине палăртрĕ.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**
**Н. ПАВЛОВА сăн ÿкерчĕкĕ.**

**Ыран – Мăн кун**

### ХИСЕПЛĔ ЕНТЕШСЕМ!

Сире пурне те пĕтĕм тĕнчери христиансен мĕн пур уявсен уявĕпе – Мăн кун ячĕпе саламлатăп. Çак савăнăçсен савăнăçĕ пулса тăракан уяв ырă усала, тĕрĕслĕх тĕрĕсмарлăха, пурнăç вилĕме çĕнтернине пĕлтерет («Христос вилĕмĕнчен чĕрĕлнĕ, вилĕмĕпе вилĕме çĕнтерсе, вилнисене чĕрĕлĕх панă» (Мăн кун кĕллин тропарĕ). Туррăн халалĕсем пире тĕрĕс çулпа утма, çывăх çынсене, йывăрлăха, инкеке лекнисене пулăшма, пĕр-пĕринпе ырă кăмăллă пулма вĕрентеççĕ.

Турăшăн эпир – пурте тăвансем. Çакна асра тытса пурăнмалла пирĕн. Пĕр-пĕрне кÿрентересрен, усал ĕçсем тăвасран сыхланмалла, май килнĕ таран пĕр-пĕрне пулăшма тăрăшмалла. Ахальтен каламаççĕ вĕт ырă туни каялла та ырăпах таврăнать, тесе. Ĕмĕр пурпĕрех иртет: чун-чĕрепе пуянрах та илемлĕрех, тасарах пулнине, пĕр-пĕрне ăнланса пурăннине нимĕн те çитмест. Кун пек чухне çемьесенче те шăкăл-шăкăл пурнăç пулĕ, вĕсенчи ачасем те телейлĕрех туйĕç хăйсене, çынсем тÿрĕ çултан пăрăннă тĕслĕхсем те палăрмаллах чакĕç. Пурте пĕрле пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлесен, пурăнсан, пĕр-пĕрне пулăшсан кăна ĕç ăнать, йывăрлăхсене çĕнтерме çăмăлрах. Район аталану çулĕпех кайтăр тесен пирĕн çакна асра тытса, малалла та пĕрле тулли кăмăлпа тăрăшса ĕçлемелле. Ку çапла пуласса эпĕ шанатăп.

Сире пурне те çирĕп сывлăхлă вăрăм кун-çул сунатăп. Турă сире, сирĕн çемйĕрсене инкек-синкекрен сыхлатăр, йывăр самантсенче çăмăллăх кÿтĕр. Телей яланах пурнăç çулне уçса пытăр. Вилĕмрен чĕрĕлсе тăнă Христосăн ырăлăхĕ яланах сирĕнпе пултăр.

**Район администрацийĕн пуçлăхĕ**
**Р. ТИМОФЕЕВ.**

**Професси тата ĕç**

## «Эпĕ рабочи пулăттăм»

Паян промышленноçра, ял хуçалăхĕнче, строительство отраслĕнче рабочи специальноçне вĕреннĕ ăста специалистсем çитмеççĕ. Сăмах май пирĕн районти хуçалăхсенче те вĕсем çителĕксĕр. Апрелĕн 1-мĕшĕ тĕлне акă хуçалăхсенче тĕп специалистем пурĕ 7-ĕн кирли паллăччĕ. Хăш-пĕр хуçалăхсенче ферма, склад заведующийĕсем çук. Рабочи специальноçне алла илнисем валли районти хуçалăхсенчех 17 ĕç вырăнĕ пур. Тĕрлĕ ĕç тума пултаракан рабочисем те кирлĕ.

Çакна шута илсе районти ĕçпе тивĕçтерекен центрта çамрăксене професси тĕнчипе пĕтĕмĕшле паллаштарассипе кăна мар, ĕç рынокĕнчи лару-тăрăва тишкерсе профессие тĕрĕс суйласа илме вĕрентессипе тăрăшаççĕ. Унтан пĕлтернĕ тăрăх çитес эрнере республикăра, апла пирĕн районта та, волонтерсем хутшăннипе «Эпĕ рабочи пулăттăм!» акци иртет. Аслă классенче вĕренекенсене пулăшма тивĕç акцие шкулта, библиотекăсенче, рабочи специальноçĕпе ĕçлекенсене, студентсене явăçтарма палăртнă. Вĕсем çамрăксене паян ĕç рынокĕнче рабочи специальноçне алла илнисем ытларах кирлине ăнлантарса пама, çак ĕçпе ĕçлекенсен сумне ÿстерме те тивĕç.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

**Космонавтика кунĕ**

## А.Г. Николаев çулĕпе

Апрелĕн 12-мĕшĕнче Раççейре Юрий Гагарин пĕрремĕш хут космоса çĕкленнине халалласа Космонавтика кунне уявлаççĕ.

Космоспа çыхăннă документсем пирĕн муниципаллă архивра та сахал мар упранаççĕ. 222-мĕш номерлĕ архив фондĕнче космос паттăрĕсем – Ю. Гагарин, Г. Титов, А. Николаев, В. Терешкова тата ыттисем пирки каласа паракан сĕн ÿкерчĕксемпе статьясем пур. Урамсене, карапсене, вĕренÿ заведенийĕсене, çар чаçĕсене тата ыттисене космос паттăрĕсен ячĕсене панă. Вĕсем пирки кĕнекесем, очерксем, сăвăсем пичетлесе кăларнă, ÿкерчĕксем тунă, юрăсем хайланă.

Эпир вĕсемпе чăннипех те мухтанма тивĕç. Вĕсем ракета техникине аталантарас, космоса тĕпчес ĕçе пысăк тÿпе хывнă, çĕр-шывăн патшалăх тата общество пурнăçне активлă хутшăннă, хăйсен паттăр ĕçĕсемпе тăван çĕре, Раççее чапа кăларнă, унăн ятне-сумне çĕкленĕ.

**А. ФЕДОРОВА,**
**район администрацийĕн культура пайĕн эксперт специалисчĕ.**

## Çĕр улми тухăçĕ вăрлăхран килет

**Çур акине хатĕрленетпĕр**

***Çут çанталăк условийĕсем çулпа çул пĕрешкел килмеççĕ пулин те çĕр ĕçченĕ кунсерен çывхаракан çур аки пирки паян самантлăха та манмасть. Хатĕр пулăпăр-и-ха эпир çур акири оперативлăха? Çак шухăшпа пытăм эпĕ «Ударник» хуçалăхăн çĕр улми вăрлăхĕпе ĕçлекен агрономĕ В. Морозов патне.***

Ака уйăхĕн 11-мĕшĕнче çĕр улми вăрлăхĕ суйласа-тиесе ăсатакан бригадăсемпе пĕрлех хуçалăхăн производство уйрăмĕсенчи мехпарксенче ĕçлекенсем ĕçе хатĕр техникăна техосмотр тăратассипе тимлетчĕç. Кашнин шухăшĕнчех – çурхи уй-хир ĕçĕсем, ака-сухара çĕнĕ ĕмĕтсене пурнăçа кĕртесси.

– Çур акине хатĕрленесси вăл пĕр кунхи ĕç мар. Ку тĕллевпе эпир хĕлĕпех çанă тавăрса ĕçлерĕмĕр. Паян вара эпир çурхи ака-сухана хатĕрленессипе пĕр çемье пек тăрăшатпăр. Хамăр çĕр улми вăрлăхĕ туса илекен хуçалăх пулнă май янтă вăрлăха ытти хуçалăхсене те сутассипе тимлетпĕр. Çакăнта хресчене патшалăх паракан пулăшăва ырламалла кăна. Унпа усă курса юлаканăн кĕр кунĕсем çитсен пÿлмисем пушă пулмасси пирки паянах шанăç пур, – кĕтсе илчĕ пробиркăсенче сывă çĕр улми вăрлăхĕ ÿстерекен пÿлĕмре Виталий Пименович. Çакнашкал çул паракан супер-суперэлитăллă вăрлăх тĕрлĕ чир-чĕртен сывă пулни пирки иккĕленÿ çук. Вăрлăх туса илессипе çапла ĕçлесе хуçалăхăн паян сутлăх вăрлăх та чылай. Агроном пĕлтернĕ тăрăх сертификациленĕ пысăк пахалăхлă 18 тĕслĕ çĕр улми вăрлăхĕ хуçалăхра паян 1200 тонна ытла сутлăх пур. Вĕсен шутĕнче: «Удача», «Жуковский ранний», «Невский», «Любава», «Петербургский», «Елизавета», «Скарб», «Бриз», «Романо».

Эпĕ хуçалăхра пулнă кун çĕр улми вăрлăхне сутма хатĕрлессипе 7 звено тимлетчĕ. Туянакансем те черетреччĕ.

– Çĕр улми вăрлăхне ыйтакансем чылай пулнăран вăрлăх хатĕрлекенсен ушкăнне те йышлатрăмăр. Анчах черет çав-çавах чакмасть. Паян авă тăватă пысăк машина черет кĕтет, – калаçăва хутшăнчĕ хуçалăхăн тĕп агрономĕ Александр Васильев.

(Вĕçĕ 2-мĕш стр.)

**Йыхрав**

## Район хаçачĕн парнисемшĕн

Апрелĕн 21-мĕшĕнче М.П. Авдеева асăнса районти «Çĕнтерÿ ялавĕ» хаçат парнисене çĕнсе илессишĕн шашкăлла выляссипе ăмăрту ирттерме палăртнă. Ăмăртăва кирек кам та хутшăнма пултарать. Çĕнтерÿçĕсене арçынсемпе хĕрарăмсем хушшинче уйрăмшар палăртаççĕ. Пĕрремĕш вырăн йышăнакансем район хаçачĕн кубокĕсене, призлă вырăн йышăннисем медальсемпе дипломсене тивĕçеççĕ.

Ăмăрту район администрацийĕн методкабинетĕнче иртет, 10 сехетре пуçланать.

## Граждансене йышăнаççĕ

2012 çулхи апрелĕн 17-мĕшĕнче 17 сехетрен тытăнса 19 сехетчен Суд приставĕсен федераллă службин Чăваш Республикинчи управленийĕн Муркаш районĕнчи пайĕ вырнаçнă çуртра граждансене управлени ертÿçин çумĕ – Чăваш Республикинчи тĕп суд приставĕн çумĕ йышăнать. Кăмăл пуррисен çак номерсемпе шăнкăравласа çырăнмалла: (83541) 6-28-38, 6-29-01.

**Çырăнтару – 2012**

## ХАКЛĂ ВУЛАКАНĂМ!

**Районти «Çĕнтерÿ ялавĕ» хаçата июльтен илсе тăма малалла çырăнтараççĕ. 6 уйăха çырăнмалли хак – 204 тенкĕ.**

**Вулакансене пĕлтернĕччĕ, июль уйăхĕнчен шăмат кунсенчи кăларăм хальхи пек 6 страницăпа мар, 8 страницăпа тухма пуçлать.**

**Райхаçат редакцийĕ.**

# Çĕр улми тухăçĕ вăрлăхран килет

Çур акине хатĕрленетпĕр

**(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).**
Патшалăх пулăшăвĕ тенĕрен. Хуçалăх паян çĕр улмин элита вăрлăхăн килограмне 15–18 тенкĕпе сутать. Ăна туянакансене вара патшалăх пĕр тоннăшăн 13380 тенкĕ субсидилет. Репродукциллĕ вăрлăх хакĕ – 10 тенкĕ. Патшалăхăн çакнашкал пулăшăвĕпе усă курса «Ударникран» Воронежпа Самара облаçĕсенчи хресченсем самай вăрлăх туяннă ĕлкĕрнĕ. Республикăри хуçалăхсем те, районта ыранхи кунпа пурăнакансем те çак пулăшупа усă курас çул çине тăнă ĕнтĕ. Çапла вара юлашки кунсенче кăна хуçалăх 300 тоннăна яхăн паха çĕр улми вăрлăхĕ сутнă.

Халăха паха вăрлăхпа тивĕçтерме хуçалăх Муркаш пасарĕнче «иккĕмĕш çăкăр» вăрлăхĕ сутассине йĕркеленĕ. Ку вăл килти хушма





хуçалăх ертӳçисем те кăçал çĕр улмин паха вăрлăхне лартса хăварса пысăк тухăç илессе шантарать. Мĕншĕн тесен малараx асăннă сортсем пурте çĕр улмин чирĕсене, нематодăна хирĕç çирĕп тăраççĕ.

Çĕр улми вăрлăхĕ сутнипе пĕрлех хуçалăхра ял хуçалăх техникине çур акине хатĕрлессипе те çанă тавăрсах тăрăшаççĕ. Эпĕ хуçалăхра пулнă кун кунти трактористсем хăйсен «хурçă учĕсене» техосмотр тăратса ĕçе тухма ирĕк илчĕç.

– Тĕрĕслев пур техникăна та ĕçе хатĕрлесех çитерейменнине кăтартрĕ. Çитменлĕхсене сывăх вăхăтрах пĕтерме тăрăшăпăр. Мĕн пурнăçламалли халĕ паллă, – кĕскен хуравларĕ хуçалăх инженерĕ И. Алексеев.

Унăн сăмахне çирĕплетсе пирĕн патăмăра Изосим Николаевич Васильев механизатор хăйне шанса панă ВТ-100 тата МТЗ-80 тракторсем патĕнчен кăмăллăн пычĕ. Унăн «хурçă учĕсем» çур акине тухма хатĕр.

Патшалăх техника надзорĕн районти инженер-инспекторĕ С. Николаев ĕçе тухма ирĕк пама тракторсем пĕрин хыççăн теприне малалла тĕрĕслерĕ.

**А. БЕЛОВ.**

**Сăн ӳкерчĕксенче: И. Васильев механизатор юсав ĕçĕсене вĕçленĕ; В. Морозов: «Сывă вăрлăх çапла ӳсет».**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**

Чрезвычайлă лару-тăруран асăрханма

# Правительство комиссийĕ ĕçлерĕ

Ака уйăхĕн 10-мĕшĕнче район администрацийĕн ларусем ирттермелли залĕнче Чăваш Республикин пушар хăрушсăрлăхĕпе тивĕçтерессипе тата чрезвычайлă лару-тăрава сиресси-асăрхаттарассипе ĕçлекен Правительство комиссийĕн анлă ларăвĕ пулчĕ.

Ларăва ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ – ял хуçалăх министрĕ тата ЧР пушар хăрушсăрлăхĕпе тивĕçтерессипе тата чрезвычайлă лару-тăрава сиресси-асăрхаттарассипе ĕçлекен Правительство комиссийĕн председателĕ С. Павлов ертсе пычĕ. Канашлăва хутшăннисем Муркаш районĕнче юлашки çулсенче пушар тухасси чакса пыни, иртнĕ çулхи шыва кĕмелли тапхăрта пĕр çын та шыва кайса пурнăçран уйрălманни район администрацийĕ хăрушсăрлăх ыйтăвĕсемпе тĕллевлĕн ĕçлесе пынине палăртрĕç.

Пухăннисем кĕçех шыва кĕмелли тапхăр çитнĕрен çынсем шыва кĕрекен вырăнсене малтанах тĕрĕслесе хатĕрлемелли пирки калаçрĕç. Иртнĕ çул Муркаш районĕнче шыва кĕмелли 11 вырăн хатĕрленĕ пулсан вĕсене сезон пуçланиччен йăлтах тĕрĕсленĕ.

– Республикăри ытти районсенче те çак ыйăва тĕслĕхе аталантармалла тата профилактика ĕçне вăйлатмалла. Шывра çын вилни республикăшăн хăрушă пулăм, – терĕ иртнĕ çул шывра 108 çын пурнăçĕ татăлнине палăртса С. Павлов.

Вăрман пушарĕсенчен асăрханассине те лару тĕплĕн пăхса тухрĕç. «Çуркунне типĕ курăк хăрушлăх кăларса тăратнине массăллă информаци хатĕрĕсем урлă халăха асăрхаттарса тăрасси – кун йĕркинчи ĕç», – палăртрĕ ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ С. Павлов.

Правительство комиссийĕ ĕçĕ хыççăн республикăри пушар хурал ĕçченĕсем Муркашри информаципе культура центрĕнче кăçалхи пĕрремĕш кварталти ĕç-хĕле пăхса тухрĕç. Пĕрле пулса вырăна тухса районти ВДПО уйрăмĕн ӳсĕмĕсемпе паллашрĕç. Кунта Раççей МЧСĕн Чăваш Республикинчи Тĕп управленийĕн пуçлăхĕ С. Антонов генерал-майор хăйсен малашлăхне ирĕклĕ пушар хуралĕпе çыхăнтарнисен пĕр ушкăнне тав туса удостоверенисем пачĕ.

**А. ПЕТРОВ.**

Космонавтика кунĕ

# Паллă куна хатĕрленсе

2011 çулта Юрий Гагарин тĕнчипе пĕрремĕш хут космоса парăнтарнăранпа 50 çул çитнине паллă турăмăр пулсан кăçал пирĕн ентеш Андриян Николаев тĕнче уçлăхне вĕçнĕренпе 50 çул çитет. Çак паллă куна тивĕçлипе кĕтсе илме хатĕрленсе районта шкул ачисем хушшинче тĕрлĕрен интереслĕ викторинăсем, конкурссем тата ытти мероприятисем пулса иртеççĕ.

Хăш-пĕр мероприятисене ирттертĕмĕр ĕнтĕ, палăртнă мероприятисем те çук мар. Кунта чи малтанах çамрăксен Николаев вулавĕсене, ачасен космосла çыхăннă теттисен районти конкурсне, районти «Дорога в космос» акцие, космонавтика ветеранĕсемпе йĕркелекен тĕл пулусене асăнмалла.

2012 çулта Юнкă шкулĕнчи çамрăк космонавтсен «Юнга» команди хăйне лайăх енчен кăтартать. Вĕсем республикăра ирттернĕ çамрăксен Николаев вулавĕсенче, пĕтĕм Раççейри «Юный космонавт» конкурсăн республикăра ирттернĕ тапхăрĕн практика турĕнче, теори турĕнче çĕнтерӳçĕсем тата призерсем пулса тăчĕç.

Апрелĕн 12-мĕшĕнче Калайкассинчи тата Юнкăри шкулсенчи çамрăк космонавтсем Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Шуршăл ялне çамрăк космонавтсен республикăри «Нас зовут космические дали» слетне кайса килчĕç. Хăйсен ĕç-хĕлĕн 2012 çулхи пĕтĕмлетĕвĕсемпе Юнкăсен «Юнга» команди республикăра пĕрремĕш вырăна тивĕçрĕ. Командăри Мария Сытина тата Екатерина Федорова çамрăк космонавтсем чи пысăк – «Звезда» ят илме пултарчĕç.

**С. ЕГОРОВА,**
**ачасен пултарулăх çурчĕн методисчĕ.**

Выставка-конкурс

# Ăстасене йыхравлаççĕ

Республикăра трактор техникине хăйсем тĕллĕн туса хатĕрлекенсен «Кулибин XXI века» выставка-конкурсне ирттерессине йăлана кĕчĕ ĕнтĕ. Пуçласа ăна 2009 çулта йĕркеленĕ.

Асăннă конкурс кăçал та иртет. Çĕнтерӳçĕсене укçан парнесем пама пăхса хунă: 1-мĕш вырăншăн – 15 пин тенкĕ, 2-мĕш вырăншăн – 10 пин тенкĕ, 3-мĕш вырăншăн – 5 пин тенкĕ. Гран-при – 30 пин тенкĕ.

Конкурс икĕ номинаципе иртет: «Тракторная техника» тата «Сельскохозяйственные машины и орудия».

Конкурса хутшăнма кăмăл тăвакансен сентябрĕн 1-мĕшĕччен заявка тăратмалла, трактор (машина е ĕç хатĕрĕ) пирки çырса кăтартни пулмалла, 3-4 сăн ӳкерчĕк е видеофильм кирлĕ пулать.

Пирĕн пата çыраççĕ

# Ырă ĕç хамăртан пуçланать

Культура, культура тетпĕр. Анчах та кашнин кăмăл-сипечĕ ырă та таса пулмасан епле пурăнăп-ха çак çĕр çинче?

Манăн Йӳçкассинчи Константин Ярухин йĕркеленĕ «Сипет» пултарулăх ушкăнне пысăк тав сăмахĕ калас килет. Нумаях пулмасть вĕсем Ваçкассинчи Культура çуртĕнче Николай Сидоровăн «Кантăкран шаккарĕ хамăр ял каччи» камитне лартса пачĕç. Татьяна Васильева, Петр Петров, Константин Ярухин, Илья Алексеев, Алина Димитриева, Александр Алексеев, Мария Александрова, Марина Михайлова тата ыттисем пире çак кас чăннипех те хаваслă кулăпа кăмăл-туйăм парнелерĕç.

**Т. МИХАЙЛОВА.**

Ваçкасси ялĕ.

Конкурс

# «Муркаш пики – 2012»

«Муркаш пики – 2012» конкурс районта улттăмĕш хут иртрĕ. Кăçал тăхăр пике хăйсен пултарулăхĕпе, илемлĕхĕпе куракана тыткăнларĕ. Тĕрлĕ конкурсра пĕри тепринчен маттуртарах пулчĕ.

Чи малтанах пухăннисене жюри членĕ В. Вязов саламларĕ, ăнăçу сунчĕ. Çавăн пекех сцена çинче «Вице мисс Чăваш пики – 2011» Л. Цветкова тата «Чăваш пики – 2010» çĕнтерӳçи А. Королева пулчĕç.

Пурте тĕплĕ хатĕрленнĕ, çапах та жюри членĕсем вĕсенчен пĕрне пысăк хак пачĕç. «Муркаш пики – 2012» титула Муркаш лицейĕнче вĕренекен Елена Порфирьева тивĕçрĕ. Вăлах район чысне апрелĕн 27-мĕшĕнче республика шайĕнче хӳтĕлĕ. Апла пулсан ăна ăнăçу сунар, çĕнтерӳпе кĕтер.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

# «Кĕмĕл сасă»

Эрне каялла Шупашкарта Пĕтĕм тĕнчери чăваш эстрада юррисен «Кĕмĕл сасă» 13-мĕш фестиваль-конкурсĕ иртрĕ. Çак конкурса Тойкилтĕри Культура çурчĕ çумĕнчи «Хĕлхем» ансамбле çӳрекенсем те хутшăнчĕç: С. Иванова, А. Железновпа А. Михеева. Чăваш наци конгресĕ ирттернĕ çак конкурса хутшăннă эстрада юрăçисем хушшинче виççĕшĕ те тĕрлĕ номинацисенче мала тухма пултарчĕç.

Эстрадăн анлă «хирне» тухса тĕрлĕ илемлĕ юрăкĕвĕпе куракана савăнтарасшăн çамрăк юрăçсем. Ялта пурăнакан яш-кĕрĕме вара çӳлелле хăпарма шанчăк сахалтарах. Илемлĕ, чуна тивекен сăвă-юрă çыртарма, композитора кĕвĕ хывтарма, ăна пысăк ăста патĕнче илемлетме, диск çине çыртарма укça-тенкĕ нумай кирлĕ. Çак пысăк пĕлтерĕшлĕ фестиваль-конкурса хутшăнма пулăшнăшăн Тойкилтĕри Культура çурчĕ çумĕнчи «Хĕлхем» эстрада ушкăнĕ Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутатне Н. Ванеркина, С. Иванов предпринимателе спонсорла пулăшу панăшăн, юрă-кĕвĕпе илемлетме пулăшнă В. Ильдяков баянистa, Муркашри искусство шкулĕнче ташă ăсталăхне вĕрентекен О. Григорьевăна, Йӳçкассинчи Культура çуртĕнче вăй хуракан Э. Степанова, В. Железнов илемлĕх ертӳçине, çавăн пекех конкурсантсене юрăсен пуххине хатĕрлеме пулăшнăшăн Тойкилтĕ шкулĕнче вĕрентекен Д. Саватеевăна, Ю. Железновăна чĕререн тухакан тав сăмахĕ калать.

**Ю. ЕВСТАФЬЕВА,**
**Тойкилтĕри тĕп шкулта вĕрентекен.**

Саламлатпăр



Муркашра пурăнакан юратнă та хаклă çыннăмăра, вăрçăпа ĕç ветеранĕ – **Георгий Арсентьевич МАРТЫНОВĂН** акан 13-мĕшĕнче сумлă юбилей: вăл 90 çул тултарчĕ. Эпир – мăшăрĕ Мария Прохоровна, ачисем, кĕрӳшĕсемпе кинĕсем, мăнукĕсем, кĕçĕн мăнукĕсем – пурте ăна паллă кунпа чĕререн тухакан сăмахсемпе ăшшăн саламлатпăр. Пирĕн юрату, хисеп, тимлĕх сана вăй-хал парса тăтăр. Малашне те çирĕп сывлăхлă, тулли телейлĕ пулма çĕкленӳллĕ кăмăл-туйăм, лăпкă та канлĕ ватлăх, вăрăм кун-çул сунатпăр.

Пурнăçăн пур пăрнăçĕнче те пулса курса пур йывăрлăха та тӳссе ирттертĕн, пуçна нихăçан та усмарăн, шанса панă кирек епле ĕçе те ответлăха туйса тĕплĕ пурнăçларăн. Пирĕншĕн эсĕ яланах ырă тĕслĕх, мухтава тивĕçлĕ çын. Эпир сана тав тăватпăр, малашне те ырлăх-сывлăх кăна сунатпăр.



Хисеплĕ те юратнă аннене, асаннене, кукамая – Çурлатри ялĕнче пурăнакан **Зоя Викторовна НИКИТИНĂНА** 70 çул тултарнă ятпа ăшшăн саламлатпăр. Ырлăх-сывлăх, иксĕлми телей, вăрăм кун-çул сунатпăр. Турри сана вăй-хал парнелетĕр, чир-чĕртен упраса тăтăр. Тавтапуç сана пуриншĕн те.

Тав тăватпăр сана чĕререн,
Тайма пуç сана пирĕнтен.
Ăшшуна паратăн-çке чунтан,
Эсĕ хаклă ылтăн-кĕмĕлрен.

**Саламлаканĕсем: ывăлĕпе кинĕ, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, мăнукĕсем, тăванĕсем.**

Юратнă мăшăра, аннене, кукамая – Пиккикасси ялĕнче пурăнакан **Зоя Николаевна ВАСИЛЬЕВĂНА** 55 çулхи юбилей ячĕпе чи çепĕç те ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Эсĕ пурри – нимĕнпе виçейми пуянлăх, савăнăç, телей. Эсĕ пиршĕнĕн яланах ырă тĕслĕх, пурнăç хăвачĕ. Тавах сана ырă кăмăлушăн, пире чун ăшшине парнеленĕшĕн, яланах пулăшса тăнăшăн. Эпир сана юрататпăр, çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул, тату пурнăç сунатпăр. Сăн-питӳ яланах ăшă кулăпа çиçтĕр санăн.

Тулăх, вăрăм пултăр ĕмĕрӳ,
Чир мĕнне ан пĕлтĕр сывлăху,
Тату пултăр ĕмĕр пурнăçу,
Такăр пултăр яланах çулу.
Тав сана пуриншĕн те чунтан,
Эсĕ хаклă кĕмĕл-ылтăнран,
Эс пурри пире савăнтарать,
Пурăнма ялан вăй-хал парать.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, мăнукĕсем, хăти-тăхлачисем, çывăх тăванĕсем.**

Сыватнăшăн тав

Инкек куçа курăнса килмест. Нумаях пулмасть йывăр чирлесе ӳкрĕм. 3–4 кун килтех аптăраса пурăннă хыççăн ывăл районти тĕп больницăна леçсе хăварчĕ. Больницăра вăй хуракансен манăн сывлăхшăн сахал мар тăрăшма тиврĕ. 14 кун хушши сипленнĕ хыççăн халĕ килте ерипен çӳрекелĕп. Мана, 76 çулхи ватă çынна, сывалма пулăшнăшăн, ура çине тăратнăшăн Инна Королькова, Юрий Корольков тата ытти тухтăрсене, медицина сестрисемпе санитаркăсене те чĕререн тухакан тав сăмахĕ калатăп. Сирĕн пархатарлă ĕçре яланах ăнăçу пултăр, хăвăр та ырлăх-сывлăхлă пулăр.

**Тамара ШИШКОВА.**

Хорнуй ялĕ.

# КУДА ПОЙТИ УЧИТЬСЯ?

Наступила весна… Скоро придет пора выпускных экзаменов. Все выпускники задаются вопросом: «Куда пойти учиться?». В нашей республике множество образовательных учреждений, и, казалось бы, выбор очень велик. Но… почему же каждую весну сотни выпускников с таким волнением выбирают вуз, в котором будут осваивать выбранную по душе профессию?...

Качественное высшее образование в нашей республике можно получить, если поступить в один из ведущих вузов Чувашии - Чебоксарский кооперативный институт, история которого уже насчитывает 50 лет, этот институт является филиалом Российского университета кооперации, который в этом году отмечает свое 100 - летие.

**В нашем вузе набор абитуриентов ведется на 5 факультетов: юридический, факультет бухгалтерского учета и прикладной информатики, факультет экономики и менеджмента, торгово-технологический факультет и финансовый факультет.**




История юридического факультета ЧКИ насчитывает почти 20 лет, и каждый год растет количество желающих получить престижное юридическое образование. Да, в наше время многие хотят стать юристами, и это неудивительно: в правоохранительных и судебных органах, в государственных, коммерческих, хозяйственных и других организациях существует большая потребность в хороших юристах. Более того, для высококвалифицированных, компетентных руководителей, способных обеспечить развитие предприятий всех отраслей экономики России, юридическое образование просто необходимо.

Профессия юриста востребована во все времена. Качественное юридическое образование всегда высоко ценилось, являлось и является одним из самых престижных, это классика, основа основ.

В 80-90-х г. прошлого столетия произошли изменения в нашем обществе, связанные с формированием правового, демократического государства. В середине 90-х годов 20-го века мода на юридические факультеты достигла пика своей популярности. Востребованность юридической специальности была как никогда высока. И, казалось бы, к началу 21 века наша страна должна была иметь достаточное количество высококвалифицированных специалистов. Однако и сегодня найти хорошего юриста для компании, хорошего адвоката для гражданина является большой проблемой. Формула товарного рынка «спрос рождает предложение» применима и в сфере юриспруденции.

**Почему именно этот институт?**

Чебоксарский кооперативный институт имеет отличную репутацию среди аккредитованных вузов страны. В нашем институте соблюдаются все требования, которые предъявляются к подготовке бакалавров по всем направлениям, в том числе и по направлению «Юриспруденция».

Наш институт единственный, где впервые в Чувашии с 2011 года открыта магистерская программа «Юрист в сфере государственной службы, правосудии и бизнесе».

Весомым доводом в пользу выбора именно Чебоксарского кооперативного института является и то, что здесь работает значительное количество профессоров и доцентов, докторов и кандидатов наук. Здесь есть аспирантура, работает диссертационный совет.

В нашем вузе развитие библиотечной системы находится на таком высоком уровне, что позволяет студентам оперативно находить нужную информацию, своевременно готовиться к занятиям и проводить научные исследования на высоком уровне. Также на надлежащем уровне оснащены учебные аудитории, это позволяет проводить занятия в интерактивной форме, что делает освоение знаний увлекательным и интересным.

Чебоксарский кооперативный институт выпустил множество известных и успешных людей Чувашии, в их числе Глава Чувашской Республики М.В. Игнатьев.

В нашем институте создана уютная атмосфера, рабочая обстановка, преподаватели всегда готовы прийти на помощь, можно сказать, что в нашем вузе царит атмосфера совместного творчества. У студентов ЧКИ яркая, насыщенная событиями жизнь: участие в научных конференциях, в конкурсах, в том числе и в международных, команда КВН института регулярно участвует в Международном Сочинском фестивале команд КВН. Наши студенты активно занимаются спортом, в институте работают бесплатные спортивные секции. Иногородним студентам предоставляется благоустроенное общежитие, которое находится рядом с учебным корпусом.

Будущим студентам советуем: нужно тщательно подходить к выбору образовательного учреждения, ведь это тот самый фундамент в построении Вашей будущей карьеры!

## Чебоксарский кооперативный институт (филиал) Российского университета кооперации

**В 2012 году осуществляет прием по направлениям бакалавриата и магистратуры**

**Высокий стандарт качества образования**

**ПЕРЕЧЕНЬ ДОКУМЕНТОВ ДЛЯ ПОСТУПЛЕНИЯ:**
**1. Заявление (заполняется в приемной комиссии);**
**2. Документ об образовании (при зачислении - подлинник);**
**3. Свидетельство о результатах ЕГЭ;**
**4. Четыре фотографии (размер 3х4 см);**
**5. Два конверта с маркой по России;**
**6. При себе необходимо иметь паспорт.**

**Подготовительные курсы: (8352)41-97-35.**

**Вы можете получить дополнительную информацию в приемной комиссии по тел.: (8352)41-98-35.**
**Адрес: 428025, г. Чебоксары, пр. М. Горького, 24,**
**проезд троллейбусами: № 3, 7, 12, 14, 21,**
**автобусами: №12-э, 15-э, 23, 101-с, 101-э**
**до остановки «Новое село», «Кооперативный институт».**

Лицензия серии ААА №001380, рег. №1331 от 24.05.2011 г.
Свидетельство о государственной аккредитации серии АА № 001732, рег. № 1697, в т.ч. по направлениям бакалавриата (приложение № 43), от 11.12.2008 г.

## Чебоксарский кооперативный институт (филиал) Российского университета кооперации в 2012 году осуществляет прием по направлениям бакалавриата и магистратуры

| *Наименование направления подготовки* | *Профиль* | *Бакалавриат. Форма обучения, сроки, вступительные испытания:* *Для лиц, имеющих среднее (полное) общее образование* | *Вступительные испытания (результаты ЕГЭ)* | *Для лиц, имеющих среднее профессиональное и высшее образование* | *Вступительные испытания* | *Магистратура:* *Магистерская программа* | *Форма обучения, сроки:* *Для лиц, имеющих высшее образование* | *Вступительные испытания* |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| **Юриспруденция** | | **очная** – 4 года<br>**очно-заочная (вечерняя)** – 4 года 2 мес.<br>**заочная** – 4 года 6 мес. | русский язык, история, обществознание | **сокращенная:**<br>**на базе СПО**<br>**заочная** – 3 года 6 мес.<br>**на базе ВПО**<br>**заочная** – 3 года | в форме собеседования по направлению | Юрист в сфере государственной службы, правосудии и бизнесе | **очная** – 2 года<br>**заочная** – 2 года 5 мес. | в форме собеседования по направлению |
| **Экономика** | Финансы и кредит | **очная** – 4 года<br>**очно-заочная (вечерняя)** – 4 года 2 мес.<br>**заочная** – 4 года 6 мес. | русский язык, математика, обществознание | **сокращенная:**<br>**на базе СПО: очная**– 3 года<br>**заочная** – 3 года 6 мес.<br>**на базе ВПО**<br>**заочная** – 3 года | в форме собеседования по направлению | Управление финансами компаний и финансовых институтов | **заочная** – 2 года 5 мес. | в форме собеседования по направлению |
| | Бухгалтерский учет, анализ и аудит; | **очная** – 4 года<br>**заочная** – 4 года 6 мес. | | | | Бухгалтерский учет, анализ и аудит; Управленческий учет и контроллинг | | |
| | Экономика предприятий и организаций | **очная** – 4 года<br>**заочная** – 4 года 6 мес. | | **сокращенная на базе СПО:**<br>**заочная** – 3 года 6 мес. | | Экономика организации | | |
| | Налоги и налогообложение | **очная** – 4 года | | **сокращенная на базе СПО:**<br>**заочная** – 3 года 6 мес. | | Налоговый менеджмент | | |
| | Мировая экономика | **очная** – 4 года | | отсутствует | отсутствует | отсутствует | отсутствует | отсутствует |
| **Менеджмент** | Управление малым бизнесом; Управление человеческими ресурсами | **очная** – 4 года<br>**очно-заочная (вечерняя)** – 4 года 2 мес.<br>**заочная** – 4 года 6 мес. | русский язык, математика, обществознание | **сокращенная на базе СПО:**<br>**очная** – 3 года<br>**заочная** – 3 года 6 мес. | в форме собеседования по направлению | Менеджмент в коммерческих организациях | **заочная** – 2 года 5 мес. | в форме собеседования по направлению |
| **Государственное и муниципальное управление** | | **очная** – 4 года<br>**очно-заочная (вечерняя)** – 4 года 2 мес.<br>**заочная** – 4 года 6 мес. | русский язык, математика, обществознание | **сокращенная на базе СПО:**<br>**заочная** – 3 года 6 мес. | в форме собеседования по направлению | Региональное управление | **заочная -** 2 года 5 мес. | в форме собеседования по направлению |
| **Торговое дело** | Коммерция; Маркетинг в торговле; Логистика в торговле | **очная** – 4 года<br>**очно-заочная (вечерняя)** – 4 года 2 мес.<br>**заочная** – 4 года 6 мес. | русский язык, математика, обществознание | **сокращенная на базе СПО:**<br>**заочная** – 3 года 6 мес. | в форме собеседования по направлению | Инновационная коммерческая деятельность; Стратегическая логистика в торговле | **заочная** – 2 года 5 мес. | в форме собеседования по направлению |
| **Товароведение** | Товароведение и экспертиза товаров в области стандартизации, сертификации и управления качеством продукции; Товарный менеджмент | **очная** – 4 года<br>**заочная** – 4 года 6 мес. | русский язык, математика, обществознание | **сокращенная на базе СПО:**<br>**заочная** – 3 года 6 мес. | в форме собеседования по направлению | отсутствует | отсутствует | отсутствует |
| **Прикладная информатика** | Прикладная информатика в области экономики | **очная** – 4 года | русский язык, математика, информатика и ИКТ | **сокращенная на базе СПО:**<br>**очная** – 3 года<br>**заочная** – 3 года 6 мес. | в форме собеседования по направлению | Прикладная информатика в коммерческих организациях | **заочная** – 2 года 5 мес. | в форме собеседования по направлению |
| **Технология продукции и организация общественного питания** | | **очная** – 4 года<br>**заочная** – 4 года 6 мес. | русский язык, математика, химия | **сокращенная на базе СПО:**<br>**очная** – 3 года<br>**заочная** – 3 года 6 мес. | в форме собеседования по направлению | Управление качеством пищевой продукции | **заочная** – 2 года 5 мес. | в форме собеседования по направлению |
| **Управление качеством** | | отсутствует | отсутствует | **сокращенная на базе СПО:**<br>**очная** – 3 года<br>**заочная** – 3 года 6 мес. | в форме собеседования по направлению | отсутствует | отсутствует | отсутствует |

# Кил тата хушма хуҫалăх



## «Сĕтел ҫинчен пыл татăлман»



Хăй ĕҫне чунĕпе парăннă ҫын яланах хитре те усă кăмăллă. Унăн ĕҫченлĕхĕнчен тĕлĕннипе пĕрлех хăйĕнпе ларса калаҫсан чун та уҫăлать, ырă ĕмĕтсем ҫуралаҫҫĕ, пурнăҫăн малашлăхĕ вăй илет.

– Анне 1937 ҫулта пыл хурчĕсемпе ĕҫлеме пуҫланă та, пирĕн кил таврашĕнче ҫавăнтанпах вĕлле хурчĕ татăлмасть. Хам та ҫак ĕҫпе 27-мĕш ҫăва тухатăп. Ҫирĕм вĕллене яхăн хурт-хăмăр ҫемйи лайăх хĕл каҫрĕ тесе шутлатăп та тухăҫлă ҫу кунĕсем кĕтетĕп, – тесе пуҫларĕ хăйĕн аса илуллĕ калаҫăвне Шомикра пурăнакан Семен Васильевич Ильмендеров. Эпир унпа Чăваш Республикинчи «Хурт-хăмăр ĕрчетес ĕҫ агенстви» акционерсен усă обществин Муркашри магазин-хатĕрлев пунктĕнче тĕл пултăмăр. Вĕлле хурчĕсене ҫăва кăларас вăхăтри ҫĕнĕлĕхсемпе паллашма килнĕччĕ утарҫă.

Тупăннă пушă вăхăтпа усă курса эпир унпа сăмах ҫумне сăмах хушса килти хушма хуҫалăхра йăхран йăха куҫакан ĕҫ-хĕл историйĕпе паллашрăмăр.

Семен Васильевичăн амăшĕ – Пелагея Михайловна – 1937 ҫулта вĕлле хурчĕпе туслашнă та 61 ҫул ҫак юратуран сивĕнмен. «Анне 83 ҫула ҫитсе пурнăҫран уйрăлчĕ. Ҫак хушăра сĕтел ҫинчен пыл кайман. Пире, 6 ачине, пыл ҫитерсех тата унран хатĕрленĕ чĕрĕ эмелпех аттепе иккĕшĕ таса-сывă ӳстерсе пурнăҫ ҫулĕ ҫине кăларчĕҫ. Тавах вĕсен ĕҫчен аллисене», – шăппăн калаҫрĕ арҫын. Ашшĕ-амăшĕн килти хушма хуҫалăхра суйласа илнĕ ĕҫне паян аслă ывăлĕ Семен Васильевич тата унăн йăмăкĕ Галина малалла тăсаҫҫĕ. Галина паян Чуманкассинче пурăнать.

Килти хушма хуҫалăхра 20 вĕлллене яхăн пыл хурчĕ тытасси ҫăмăл ĕҫ маррине ялта пурăнакан пĕлетех ĕнтĕ. Вĕсенчен иртнĕ ҫул кашнинчен вăтамран пĕрер пăт пыл илни те Семен Васильевичпа унăн мăшăрĕ Вера Петровна ҫак ĕҫе чунĕпе парăннине тата вĕсен тăрăшулăхĕ ҫуллĕ шайра иккенне кăтартать.

– Ĕҫ кăтартăвĕ пĕччен вăй хунипе пулмасть. Мана хурт-хăмăрпа ĕҫлеме мăшăрăмсăр пуҫне Сергей ывăлăмпа Света хĕрĕмĕн ҫемйисем те тĕкĕ парсах пыраҫҫĕ. Виҫĕ мăнукăм пĕчĕккĕ-ха, анчах пыл ҫиме вĕсем те пулăшаҫҫĕ. Тен, пурăнан пурнăҫра ҫак шăпарлансем те утарҫă пулса тăрĕҫ? – ыйтуллăн тинкерчĕ мана магазинра ларакан вĕлле ҫинчен куҫне илсе утар ĕҫĕнче пуян опыт пухнă кăмăллă арҫын.

Ҫамрăклах хурт-хăмăрпа ĕҫлеме пуҫланăскерĕн ҫемйи те ялта пурăнакансемшĕн хăйне евĕр ырă тĕслĕх. Пыл хурчĕсем усранăран-ши, Семен Васильевич ҫамрăк курăнать: хам умра пенсие тухнă арҫын тăнине ĕненмерĕм. Тĕрĕссех каласан ĕненеймерĕм.

Ĕҫрен ан хăра, вăл хăй санран хăратăр. Ваттисен ҫак сăмахне мала кăларнисем таврара ҫук мар. Вĕсем ĕҫе парăнни ҫулсен утăмне чарать тесен те йăнăшмастăп пулĕ. Хăйсен аллипе йĕркеленĕ утар паян Шомик тавралăхне хăйне евĕр сăн кĕртет, килти хушма хуҫалăха ҫут ҫанталăкпа ҫывăхлатать, ҫуркунне илемне ӳстерет.

Ĕҫлесен пурăнма пулать. Ĕҫчен ҫынна кӳршĕсем ҫеҫ мар, ҫут ҫанталăк та курать, хисеп тăвать, вĕлле хурчĕ те вăй ҫитнĕ чухлĕ пулăшать.

...Телей. Аслă ҫынсем телее ҫын ĕҫе юратса кайни тата киле кăмăлпа таврăнни, ĕҫе чуна юрăхлă пурнăҫлани тесе хаклаҫҫĕ. Манăн ҫĕнĕ пĕлĕшĕмĕн, Семен Васильевич Ильмендеровăн, телейĕ пурах.

**А. БЕЛОВ.**

## Пахчаҫăн уйăх календарĕ

***Ҫуркуннен иккĕмĕш уйăхĕ пахча тытакансемпе сад ĕрчетекенсемшĕн хăйне евĕр яваплă вăхăт. Таврана пăхатăн та кашни утăмрах ҫут ҫанталăк хĕл ыйхинчен вăраннине асăрхатăн. Ҫак уйăхрах садри йывăҫсемпе тĕмсене сăтăрҫăсенчен хӳтĕлессипе ĕҫсем туса ирттермелле. Пĕр ҫул ӳсекен чечексене куҫарса лартса апатлантармалла. Юр ирĕлнĕçемĕн садпахчана кĕркунне пуҫтарайман кивĕ ҫулҫăсенчен тасатас ĕҫе пуҫăнмалла. Ҫĕр ҫырли йăранĕсене тураса тасатмалла. Уйăх вĕҫнелле юртан тасалнă, ҫĕр ăшăннă вырăнсене укроп, салат акма тăрăшмалла. Сивве тӳсĕмлĕ кишĕрпе сухан тата редис акассине те ăста пахчаҫăсем ака уйăхĕн виҫҫĕмĕш вунă кунлăхĕнчех туса ирттереҫҫĕ.***

**Ака уйăхĕн 14–16-мĕшĕсем.** Пахча ҫимĕҫ акма-лартма кансĕр кунсем. Теплицăсемпе парниксене ĕҫ сезонне хатĕрлессипе тимлемелле. Юртан тасалнă йăрансем хăвăртрах ăшăнччăр тесе вĕсене полиэтилен хутпа витмелле. Йывăҫсемпе тĕмсене кăчкисем тулса кайиччен касса ҫамрăклатмалла.

**Ака уйăхĕн 16–18-мĕшĕсем.** Ӳсентăрана шăвармалла тата органикăлла удобренисемпе апатлантармалла. Кишĕре, ир пулакан ҫарăкпа редиса теплицăсене, кăшмана ăшăтса хатĕрленĕ йăран ҫине акма юрать. Ҫĕр ҫырлисен плантацийĕсене, садри улма йывăҫĕсемпе ҫырла тĕммисем тавра тислĕк хурса тухни аван.

**Ака уйăхĕн 18–20-мĕшĕсем.** Кĕске вăхăтра пулакан ӳсен-тăран акмалла-лартмалла. Пахча ҫимĕҫ культурисене шăварма тата апатлантарма меллĕ кунсем.

**Ака уйăхĕн 20–22-мĕшĕсем.** Ҫĕнĕ уйăх. Нимĕн те акма-лартма тата ӳсен-тăранпа тĕрлĕ ĕҫсем туса ирттерме юрамасть. Ҫӳп-ҫап пуҫтарни, йăрансене ҫум курăкран иртни вара ытлашши мар.

## Выльăх масарĕсем...

Раҫҫейри ял хуҫалăх надзорĕ пĕлтернĕ тăрăх пĕлтĕр Белгород облаҫĕнче выльăх ҫĕнĕр язвипе чирленĕ тĕслĕхе тупса палăртнă. 2010 ҫулта вара Ставрополь, Ростов, Омск, Волгоград облаҫĕсенче тата Дагестан Республикинче ҫак чирпе аптăранă 6 выльăха шута илнĕ. Сăмах май тĕрлĕ ҫăл куҫсенчен пĕлтернĕ тăрăх ҫĕнĕр язвипе чирлесси Грузире юлашки ҫулсенче темиҫе хут та ӳснĕ. Интернетри материалсене ĕненес-тĕк, ку чир чикĕ леш енче те хăш-пĕр ҫĕрте палăрать. Тĕнчипе илес пулсан юлашки вăхăтра ку чирпе ҫынсем аптăранă тĕслĕхсем те пулнă.

Паллах, хăшĕ-пĕри ăҫта Белгород, ăҫта Чăваш Ен теме пăхĕ. Анчах лару-тăру ҫине ҫиелтен пăхмалла мар. Раҫҫейри ял хуҫалăх надзорĕн Чăваш Республикинчи управленийĕн специалисчĕсем ҫак инфекци чăваш хресченĕсене те шар кăтартма пултарас хăрушлăх пирки аса илтереҫҫĕ. «Мĕншĕн тесен пирĕн республикăра та ку чирпе вилнĕ выльăхсен масарĕсем сахал мар. Муркаш районĕнче кăна 85 выльăх масарĕ. Ҫав шутра ҫĕнĕр язвипе вилнисене пытарнисем те пур – 36 масар. Паянхи куна пурне те тенĕ пек саккун ыйтнă йĕркене кĕртнĕ темелле. «Ҫапах та тимлĕхе ҫухатас марччĕ. Асăрханакана Турă та сыхлание пĕлтерет халăх сăмахлăхĕ», – аса илтерет патшалăх ветеринари надзорĕн ĕҫченĕ Светлана Чернова.

Манмалла мар, ҫĕнĕр язви ҫыншăн та хăрушă чир шутланать. Вăхăтра профилактика ĕҫĕсем пурнăҫламасан вăл тарăна кайса организма палăрмаллах сиен кӳме пултарать. Кĕлеткипех ҫăпансем тапса тухма пултарни кашниннех сисчĕвлентермелле. Сипленмесен сепсис пусланать, юн сиенленет. Кун хыҫҫăн нерв тытăмĕ шар курать. Чир вирус ҫаклатнă чĕр чунтан куҫать: пуснă, тирне сӳнĕ, ашне вакланă, вилline пуҫтарнă тата тĕп тунă, упранă, пĕр вырăнтан теприне ҫĕре куҫарнă, тирпейленĕ чухне. Чир лекнĕ ҫĕр лаптăкĕ ҫинче ĕҫлесси те асăрханулăх ыйтать. Ҫакна килти хушма хуҫалăх тытакансен те ҫулла выльăх-чĕрлĕх валли утă янтăланă вăхăтра асра тытмалла.

Чир палăрнă вырăнсенче ҫĕре куҫарассипе, унтан шыв илессипе ҫыхăннă ĕҫсене (сăмахран: строительство, шырав, гидромелиораци) пуҫарма, сад-пахчапа аппаланма юрамасть. Санитарие хӳтĕх зонин калăпăшне ветеринари службин органĕсем тата эпидемиологи центрĕсем палăртаҫҫĕ. Тĕрĕссипе, чирлĕ выльăха пытарнă вырăна пырса кĕмелле марри, чир хăрушлăхĕ пирки вырăнта ăнлантарсах тăмалла.

Чир питĕ хăвăрт сарăлнине кура сыхлану майĕсене яланах асра тытмалла. Ҫĕнĕр язви тĕлĕшĕпе иккĕленӳ ҫуралчĕ-тĕк выльăха пусма юрамасть. Карантин йĕрки тăрăх ҫав тĕлтен хăть мĕнле чĕр чуна та илсе тухма та, унта илсе кĕме те чарнă. Выльăх-чĕрлĕх продукцийĕ хатĕрлеме тата ăна сутма та ирĕк ҫук, чĕр чунсене урăх вырăна, ушкăна куҫарасси пирки манмалла. Чирлĕ ĕне сĕтне ĕҫмелле мар. Ют ҫынсене фермăна кĕме чармалла. Чĕр чунсене кӳлĕ хĕррине шыв ĕҫме антарма та юрамасть.

Ҫыннăн алли, пичĕ тата ытти ҫĕрте суран кăна мар, чĕрĕк пулсан та ăна инфекциллĕ ферма ҫывăхне ямалла мар.

Республикăра ҫĕнĕр язви тухас хăрушлăх пурринех кура управлени ăна вăй илме парас мар тесе кирлĕ мерăсем халех йышăнма сĕнет. Ҫак инфекцие чăтăмсăр пĕтĕм выльăха профилактика вакцинацийĕ тумалла.

Кун ҫути ҫуркунне еннелле сулăннă май ҫакна та каласа хăварас килет. Ҫĕнĕр язвипе чирлĕ выльăхсене пытарнă масарсен территорийĕсенче кĕтӳ ҫӳретме, утă ҫулма, унтан ҫĕр илме юрамасть. Ăнсăртран выльăх чирлесен кун пирки ҫийĕнчех ветеринари специалисчĕсене пĕлтермелле.

**Н. ВАСИЛЬЕВА,**
**Раҫҫейри ял хуҫалăх надзорĕн Чăваш Республикинчи управленийĕн специалисчĕ.**

**Ыран – Мăн кун**

## Ҫăмарта сăрласси

Ыран пĕрле пулса Мăн кун сĕтелĕ хушшине ларăпăр. Ҫак уяв ҫăмартасем сăрласа илемлетессипе паллă. Ăна валли тĕрлĕ мелсем пур. Вĕсенчен пĕринпе паллаштарар-ха паян хамăр вулакансене.

**Сухан хуппипе сăрласси.** Мăн кун валли ҫăмартасем сăрлама суту-илĕве ятарлă сăрăсем тухиччен ял ҫынни сухан хуппипе анлă усă курнă. Ҫак ансат ĕҫе паян та кашни ҫемьерех пурнăҫлама пултараҫҫĕ. Малтан сухан хуппинчен шыв вĕретмелле. Сивĕннĕ шыва ҫуса тасатнă ҫăмартасене ямалла. Савăта усă ҫулăм ҫине лартса шыва вĕреме кĕртмелле. 10 минут вĕретмелле. Ҫулăма сӳнтерсен ҫăмартасене кăлармалла та сивĕнме памалла. Мăн кун сĕтелĕ ҫине лартмалли ҫăмартасем илемлĕрех курăнччăр тесен вĕсене тип ҫупа сĕрсе илмелле. Сухан хуппи мĕн чуль пулнине кура ҫăмарта тĕсĕ сарăрах та, хĕрлĕрех те, хăмăртарах та пулать.

## Кулич

**Шоколадлă кулич.** Икĕ стакан ҫăнăх, 15–20 грамм ҫĕпре тата 100 грамм ăшă шыв илмелле. Хатĕр чустана хăпарма парсан лайăх кăна ҫăрмалла. Икĕ стакан сахăр песукĕпе 12 ҫăмарта саррине аван кăна пăтратса хушмалла. Ун хыҫҫăн унта терка витĕр кăларнă 2,5 стакан миндаль, 50-100 грамм хырса вĕтетнĕ шоколад, 0,6 стакан ром эрехĕ, 100 грамм хĕрлĕ эрех, стаканăн 5-мĕш пайĕ чухлĕ ыраш ҫăкăрĕнчен хатĕрленĕ сухари, пĕр чей кашăкĕ корица тата 0,5 чей кашăкĕ вĕтетнĕ гвоздика, пĕр лимон сĕткенне ямалла. Чустана лайăх хутăштармалла, 12 ҫăмарта шуррипе пăтратмалла та хăпарма памалла. Чуста шĕвĕрех пулсан ҫăнăх хушмалла. Хатĕрлесе ҫитерсен ăна ҫупа сĕрнĕ, сухари тĕпренчĕкĕсем сарса хунă савăта ямалла та духовкăра 1–1,5 сехет пĕҫермелле.

## Пасха хатĕрлетпĕр

Пасха валли 1,25 кг тăпăрчă, 100 г услам ҫу, ҫур стакан сахăр, ҫур стакан хăйма, ҫур стакан изюм, тăвар кирлĕ.

Тăпăрча икĕ хут ала витĕр кăлармалла. Ҫупа сахăра шуралса кăпăкланичченех пăтратмалла, хăйма хушса татах пăтратмалла. Хутăш крем евĕр пулать. Хыҫҫăн унта тăпăрчă хушса пăтратмалла, тăвар, изюм (малтан ислетсе ҫуса илнине) хушмалла.

Хатĕр хутăша ятарлă савăта хурса ҫĕр каҫипе (10–12 сехет) пусăрантарса шывран сăрхăнма холодильникра тытмалла. Тепĕр кун Мăн кун уяв сĕтелĕ валли пасха хатĕр те.

## Ҫăмран жилет мĕнле пулать?



Ҫак ыйту ҫине «Солнышко» ача садне ҫӳрекенсем пĕчĕк пулсан та ҫăмăллăнах хуравлама пултараҫҫĕ. Е. Кроликова тата В. Ястребова воспитательсем ертсе пыракан вăтам ушкăнри ачасем ҫак ятпа проект ҫырас тесе мĕн кăна тĕпчесе пĕлмен пуль: сурăх усранинчен пуҫласа жилет тăхăнасси таранах.

«Пурнăҫпа ҫыхăннă пулăмсем пирки ачасен пĕчĕкренех пĕлмелле. Ял ачисем ҫăм мĕнле пулнине, кайран ҫип мĕнле арланине пĕлмесен килĕшуллĕ те мар пулĕ. Тепĕр тесен пĕчĕкрен ĕҫе хăнăхса, ăна юратса ӳснинчен усси те пысăк: ачасем амăшĕсемпе асламăшĕсен ĕҫне хаклама вĕренеҫҫĕ, ăшă алса-чăлха, кофта-жилет ҫыхса тăхăнни ĕҫлемесĕр пулманнине те ăнланаҫҫĕ», – теҫҫĕ воспитательсем.

Пиллĕкри ачасемпе вĕсен аслă юлташĕсем «Ҫăмран жилет мĕнле пулать?» проектпа Пĕтĕм Раҫҫейри регион тапхăрĕнчи конкурсра хутшăнса иккĕмĕш вырăн ҫĕнсе илме пултарчĕҫ. Елена Валежникова, Диана Кабуркина тата Анастасия Пудова ача садĕнче пухнă пĕлӳпе сумлă жюрие хăйсен презентацийĕпе тата стенчĕпе хăюллăнах паллаштарма пултарнă. Ҫапла ҫав вăл: пĕчĕкренех ĕҫе тĕплĕн тума вĕренсен ӳсĕмĕ те кĕттермест.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

**Пулăшушăн тав**

«Ҫĕнтерӳ ялавĕ» хаҫатăн мартăн 24-мĕшĕнчи номерĕнче Н. Николаева ҫырнă «Йывăрлăхра пĕр-пĕрне пăрахас марччĕ» материалта пирĕн ҫемьери йывăр лару-тăру пирки сăмах пулнăччĕ. Ҫак кунсенче вара ҫĕнĕ пӳрт хăпартас ыйту вырăнтан хускалма тытăнчĕ темелле. Республикăн Патшалăх Канашĕн депутачĕ, «Моргаушская» чăх-чĕп фабрики» акционерсен усă пĕрлешӳвĕн генеральнăй директорĕ Николай Григорьевич Ванеркин пире питĕ пысăк пулăшу пачĕ. Эпир ăна чĕререн тав тăватпăр. Ырă кăмăллă ҫыннăн ĕмĕрĕ те вăрăм пултăрччĕ. Районти хаҫатăн тĕп редакторне Анатолий Иванович Тихонова тата вăл ертсе пыракан коллектива халăхăн ыйтăвĕсене ăнланса аякра тăратса хăварманшăн тав сăмахĕ калатпăр.

**Р. ПЕТРОВА.**

Лап Олкаш ялĕ.

# Уявсен уявĕ – Мăн кун

***«Шăмат кун иртсен, эрнен малтанхи кунĕнче тул çутăлнă чух, Магдалăри Марияпа тепĕр Мария тупăка пăхма пынă. Çавăн чухне çĕр пит хытă чĕтресе кайнă: Турă Ангелĕ çӳлтен аннă та, пырса тупăк умĕнчи чула йăвантарса ярса, ун çине ларнă. Вăл çиçĕм пек курăнса тăнă, туммирĕ унăн юр пек шурă пулнă. Хурал тăракансем унран хăранипе чĕтресе кайса вилнĕ пек пулнă. Ангел хĕрарăмсене каланă: ан хăрăр; эпĕ пĕлетĕп, эсир хĕрес çумне пăталанă Иисуса шыратăр. Вăл кунта çук: Хăй каланă пек, Вăл чĕрĕлсе тăчĕ. Килĕр, Вĕрентекен выртнă вырăна пăхăр та, часрах кайса, Унăн вĕренекенĕсене калăр: Вăл вилĕмрен чĕрĕлсе тăнă...».***

Çапла каласа парать Матфей çырнă Евангели Иисус Христос Турă чĕрĕлни çинчен.

Мăн кун православи тĕнĕпе пурăнаканшăн чи пысăк та çутă уяв шутланать. Мăн куна малтанах хатĕрленме тытăнаççĕ – Аслă типĕ вăхăтĕнчи кĕлĕсенче ӳкĕнеççĕ, чунпа тасалаççĕ. Турра ĕненекенсем чиркӳре пулса Турăн Ӳчĕпе Юнне ăша илеççĕ (причасть сыпаççĕ). Çак çутă уява хутшăнни вара чиркӳри кĕлĕне кайнинчен пуçланать. Кĕлĕ пĕтсен пурте пĕр пĕрне: «Христос чĕрĕлнĕ!» – «Чăн чĕрĕлнĕ», – тесе саламласа чуп тăваççĕ.

Мăн кун уявĕ хĕрĕх куна пырать: шăп хĕрĕх кун хушши Иисус Христос Турă Хăйĕн вĕренекенĕсене курăннă, хыççăн вара çӳле Ашшĕ Турă патне çĕкленнĕ.

Çынсем Мăн кун эрнинче пархатарлăх, пулăшу пирки ытларах шутлаççĕ: ĕлĕкренпех çак эрне хушшинче çирĕп сывлăхлисем, тăнăç пурнăçпа пурăнакансем чирлисем, хевтесĕррисем, тĕрмере ларакансем патне, пулăшу кирлисем патне çитсе пулăшу пама тăрăшнă.

Иисус Христос Турă пур çынна та вилĕмрен çăлас тесе асапланса вилнĕ. Вăл вилсе чĕрĕлни çын вилсен те леш тĕнче валли чĕрĕлнине пĕлтерет. Çавăнпа та Мăн куна уявсен уявĕ тесе калаççĕ.

Спорт пурнăçĕнчен

# Ӳсĕмре тренерсен тӳпи те пысăк

Республикăри «Ылтăн шайба» клубăн парнисене тата ЧР Пуçлăхĕн кубокне çĕнсе илессипе кăçалхи хоккей вăййисем Муркашсемшĕн ăнăçлă пулчĕç. Кун пирки хаçатра пĕлтерсе тăма тăрăшрăмăр. Малтанхи пĕтĕмлетӳ районсем хушшинче уйрăм пулнă пулсан пĕтĕмĕшле итог кăтартăвĕсем те (республикăри ăмăртăва хутшăннă пур хулапа район та кĕрет) савăнтараççĕ.

Хулари ачасен майсем нумайрах тетпĕр пулсан та пирĕн районти хоккеистсем малтисен йышĕнчех-ха. Кĕçĕн ушкăн 2-мĕш, вăтам ушкăн 5-мĕш, аслă ушкăн 4-мĕш, тĕп ушкăн 3-мĕш вырăнсенче пулма тивĕçнĕрен пирĕн район пĕтĕмшле 3-мĕш вырăнта.

Лару-тăру япăх мар пулни тренерсен тăрăшулăхĕнчен те нумай килет. Чăваш Республикин Вĕрентӳ тата çамрăксен политикин министерстви çакна ăнланса çĕнтерӳçĕсемпе призерсен командисене хатĕрленĕшĕн вĕсен тренерĕсене Тав çырăвĕсемпе чысланă. Пирĕн районти «Ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕ – «Сывлăх» ФСК-ра» вăй хуракан тренерсем Владимир Михайлов тата Александр Шишкин çак наградăна тивĕçнĕ. Йĕркелӳпе методика пулăшăвĕ кӳнĕшĕн, ачасене спорта явăçтарма майсем туса панăшăн спорт шкулĕн директорне Александр Куликова та çакăн пек Тав çырăвĕ парса хавхалантарнă.

**Н. НИКОЛАЕВА.**






**Районти культура çуртĕнче апрелĕн 19-мĕшĕнче ЧР тава тивĕçлĕ артисчĕ СЕРГЕЙ ПАВЛОВ шоу-концерт иртterет. Унпа пĕрле Полина Борисова, Алена Алексеева тата ытти артистсем пулаççĕ. Концерт 18.30 пуçланать. Тел.: 8-905-342-52-72.**











**ТЕПЛИЦЫ** от производителя из сотового поликарбоната 3х6, 3х8 и т. д. Телефоны: 8-917-651-00-76 8-927-858-28-79.







В Москву и Московскую обл. требуются **ФАСОВЩИЦЫ, ГРУЗЧИКИ**
Питание, проживание — БЕСПЛАТНО.
Вахта. Выезд группами до предприятия. Гарантии.
З/п 25 000-35 000 руб. 1-5.
**Тел.:8(8352)29-80-30, 29-50-30**

**Магазин «ОТДЕЛОЧНИК» продает:**
**Цемент – 190 руб.**
**Утеплитель «РОКАЛИТ» 8,64 кв.м. – 580 руб.** 8-10.
**Доставка. Тел.: 8-903-322-59-69.**







**СПУТНИКОВЫЕ АНТЕННЫ 2500 р., РАССРОЧКА. ТРИКОЛОР. ТЕЛЕКАРТА. Тел.: 8-905-345-77-19. 3-10.**


## Прогноз погоды

| | суббота 14 апреля | | | | воскресенье 15 апреля | | | | понедельник 16 апреля | | | | вторник 17 апреля | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Температура °С | +9 | +5 | +7 | +4 | +4 | +9 | +12 | +8 | +5 | +11 | +13 | +10 | +8 | +11 | +15 | +12 |
| Давление мм | 736 | 740 | 745 | 747 | 749 | 750 | 750 | 750 | 749 | 749 | 747 | 745 | 744 | 742 | 742 | 742 |
| Влажность % | 94 | 93 | 72 | 86 | 88 | 72 | 58 | 86 | 92 | 68 | 56 | 75 | 86 | 88 | 76 | 92 |
| Ветер м/сек | 5 | 9 | 6 | 2 | 4 | 5 | 4 | 1 | 1 | 2 | 6 | 5 | 4 | 4 | 3 | 1 |
| | Ю-З | З | З | Ю-З | Ю-З | Ю-З | Ю-З | Ю | Ю-В | Ю-В | В | В | В | Ю-В | Ю | Ю |
| Солнце восход / заход | | 05:47 | 19:58 | | | 05:45 | 20:00 | | | 05:42 | 20:02 | | | 05:40 | 20:04 | |
| Луна восход / заход | | 03:12 | 12:17 | | | 03:34 | 13:34 | | | 03:52 | 14:49 | | | 04:07 | 16:02 | |
| фаза | | | | | | | | | | | | | | | | |


**Продаю стенку «Галактика», б/у, в хорошем состоянии. Цена договорная. Тел.: 8-906-133-85-71.**


# Тав тăватпăр

Шаптак Муркаш ялĕнче пурăннă Ольга Игнатьевна Казаковăна юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн, пирĕн хуйха пĕрле пайланăшăн тăвансене, пускилсене, ял-йыша, Е. Андреев ячĕпе хисепленекен хуçалăха, Муркаш пасарĕнче ĕçлекен уйрăм предпринимательсене тата унти сутуçăсене тав сăмахĕ калатпăр.

**Пугачевсен çемйи.**

## Пĕлтерӳсем. Объявления


**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно. Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 4-10.**

**ООО «Металл-строй» изготавливает и продает ТЕПЛИЦЫ, козырьки, металлоконструкции, банные печи, баки из нержавейки, скамейки, ворота, туалеты, кованые заборы, решетки и т. д. Адрес: с. Моргауши, ул. Заводская, д. 14. Тел.: 63-3-38, 8-937-390-73-51. 4-5.**

**ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА от производителя, срок изготовления от 3 до 5 дней. Кредит, рассрочка, скидка до 35%, пенсионерам дополнительная скидка. Замер и доставка бесплатно. Прием заказов: с. Моргауши, ул. Гагарина, 16А (здание котельной). Тел.: 8-917-662-71-65, 8-917-655-96-77 3-3.**

**Мебель на заказ: диваны, кровати, шкафы, кухонные гарнитуры, стенки, прихожие, детская мебель. Кредит, рассрочка. Адрес: с. Моргауши, «Салон мебели» (напротив магазина «Визит»). Тел.: 8-900-330-72-60, 8-927-847-50-77. 9-10.**

**На территории Моргаушского рынка открылся магазин от Вурнарского мясокомбината «Санар-20» (рядом кафе «Минутка»). Приходите, будем рады!**

**Формируем декларацию по розничной продаже алкогольной продукции, возможно взаимовыгодное сотрудничество. Тел.: 8-919-679-72-71. 1-2.**

**Проекты зданий и инд. домов, электро-, водо- и газоснабжения, сметы. Свид. СРО. ООО «Инттехс», с. Моргауши, ул. Мира, 9А. Тел.: 62-6-03.**

* * *

**Апрелĕн 20-мĕшĕнче тăваттăмĕш пăруламалли шурăпа хĕрлĕ тĕслĕ ĕне тата хĕрлĕ кăшман, кишĕр сутатпăр. Тел.: 8-906-384-61-30.**

* * *

**Продаю комнату в г. Чебоксары за 560 т. руб. Можно за материнский капитал. Тел.: 8-965-685-53-63. 1-2.**

* * *

**Продаю плуг для Т-25 в рабочем состоянии, цена договорная. Тел.: 8-937-389-55-81. 1-2.**

* * *

**Продаю трехкомнатную квартиру по адресу: с. Моргауши, ул. 50 лет Октября. Тел.: 8-906-131-29-08, 62-8-70.**

* * *

**Куплю предметы старины: ама, хушпу серебряные от 20 000 до 100 000 рублей. Деньги сразу. Возможен залог под 0,4 процента в день. Тел.: 8-937-375-88-55. 5-5.**

* * *

**Продаю: кирпич одинарный М-100; М-125; М-150; керамический полуторный М-125; двойной керамический; силикатный белый, желтый; КББ р-р 20х20х40; красный половняк, некондиция, гравмассу, керамзит. Доставка и разгрузка на манипуляторе. Документы. Тел.: 8-903-358-20-97, 8(8352)44-20-97. 7-10.**

* * *

**Ĕне, вăкăр, пăру, сурăх туянатăп. Тел.: 8-905-343-60-63. 3-10.**

* * *

**Магазин «Сельхоззапчасти» реализует: запасные части к тракторам и сельхозагрегатам. Адрес: д. Юнгапоси. Тел.: 8-937-372-02-15, 8-927-859-69-93. 4-16.**

* * *

**Продаем пропаренные керамзитобетонные блоки, цемент, песок речной, гравмассу, керамзит. Адрес: с. Моргауши, «Агропромснаб». Тел.: 8-905-340-07-78. 2-10.**

* * *

**Требуется менеджер по продажам. Тел.: 8-927-861-55-73. 2-2.**

* * *

**Сдается киоск в аренду возле ресторана в Моргаушах. Тел.: 8(8352)51-52-51 (Чебоксары). 1-2.**

* * *

**Предприятие возьмет в аренду на длительный срок помещение под швейный цех от 50-100 кв.м. в районном центре. Тел.: 8-927-999-82-92. 1-2.**

* * *

**ОАО племзаводу «Большемурашкинский» Нижегородской области требуются строительные бригады на срок от одного до четырех месяцев, а также пастухи. Оплата договорная. Звонить по тел.: 8-831-67-5-73-86, сот. 8-910-899-52-50. 1-2.**


* * *

**ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА**

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:061901:1, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиками проекта межевания являются: Ефанова Елена Елисеевна, адрес: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, с. Большой Сундырь, ул. Трудовая, д. 14. Огадерова Елена Ивановна, адрес: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, с. Большой Сундырь, ул. Новая, д. 16.

Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5, тел.: 63-4-39. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:061901:1. Адрес местоположения: Чувашская Республика, Моргаушский район, территория землепользования СХПК «Сундырский», земельный участок расположен в северной части кадастрового квартала 21:17:061901.

С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу:429530, Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

* * *

Администрация Моргаушского района в районной газете «Сентеру ялаве» от 04 апреля 2012 года за № 25 (7986) опубликовала сообщение о наличии свободного земельного участка распределяемого на праве долгосрочной аренды.

В связи с допущенной ошибкой в объявлении, вместо «местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Чуманкасинское сельское поселение, д. Карманкасы, ул. Озерная, дом 25» следует читать «местоположение установлено относительно ориентира, расположенного за пределами участка. Ориентир жилой дом. Участок находится примерно в 260 м от ориентира по направлению на северо-восток. Почтовый адрес ориентира: Чувашская Республика, Моргаушский район, Чуманкасинское сельское поселение, д. Карманкасы, ул. Озерная, дом 25».

Турайри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкул коллективĕ кунта нумай çул физика учителĕнче ĕçленĕ **Зоя Петровна ТОЛСТОВА** вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.


**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:
Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.
ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учрежденийĕ.

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**

АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36. E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1,5 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат чăвашла юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Николаева Н.Н.
Пичете панă 13.04.2012 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин., чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4633.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.